К 84.89(=Чув)
С30
Ч-45134

Юрий Сементер

# Килĕр, килĕр, кайăксем



Национальная библиотека ЧР
4-045134

К84.89(=Чув)
С30

Юрий Сементер

# КИЛĔР, КИЛĔР, КАЙĂКСЕМ

Сăвăсем



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2012

УДК 821.512.111-93
ББК 84 (2 Рос=Чув) 6-5
С 30



Художникĕ *Светлана Кангина*

**Сементер Ю.С.**
С 30 Килĕр, килĕр, кайăксем: сăвăсем / Ю.С. Сементер. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2012. — 47 с.
ISBN 978-5-7670-2013-3

Кĕнеке Чăваш Республикин территорийĕнче тĕл пулакан вĕçен кайăксем çинчен каласа парать. С. Кангина ÿкерчĕкĕсем тăрăх ачасем вĕсене палласа илме вĕренĕç. Сăвăсем çумне хушса çырни çунатлă туссем çинчен ытларах пĕлме пулăшĕ. Йăвисене ăçта тата мĕнле тăваççĕ, мĕнпе тăранса пурăнаççĕ — пĕлес текеншĕн пурте интереслĕ.

УДК 821.512.111-93
ББК 84 (2 Рос=Чув) 6-5

Проверено 1 СЕН 2017

© Сементер Ю.С., сăвăсем, 2012
© Васильева О.Л., пухса хатĕрлени, 2012
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2012

ISBN 978-5-7670-2013-3

Ч-45134

Национальная библиотека
Чувашской Республики

# КАРĂШ.

Эп, карăш, халăхра каларăш,
Чысра тытатăп ятăма,
Вун икĕ куккукпа пĕр харăс
Эп пултаратăп авăтма.

Этем те, кайăк та ăнлантăр
Çурхи кунсен пĕлтерĕшне,
Çĕр типрĕ — сухалатăр, актăр,
Кашни ăнтартăр хăй ĕçне.

Кĕркуннеччен эп тĕрĕслетĕп
Хирти тыр-пулăн ӳсĕмне,
Çăкри сипетлĕ пултăр тетĕп,
Хĕвел пек тухтăр куç умне.



Карăш — хăраххăн пурăнакан кайăк. Вăл ытларах çĕр çинче, çӳллĕ курăксем хушшинче пытанса пурăнать. Хăрушлăхра чухне тĕлĕнмелле хăвăрт чупса пытанать. Çӳллĕ те инçе вĕçме ăна урисем чăрмантараççĕ.

# УЙĂП.

Çитрĕм вăрмана уйпа,
Тӳрех куртăм уйăпа.
Уйăп, хĕрлĕ пĕсехе,
Çухатман-мĕн тимлĕхе.

— Чарăн! — тет. — Ăçта каян?
Усал шухăш çук-и сан?
Кайăксем кăçал аран
Хăтăлайрĕç пушартан.
Çавăнпа туртаканран
Сыхланать паян вăрман.
— Уйăп, ырă шухăшпа
Килтĕм эпĕ çак çулпа.
Тен, сире пулăшмалла,
Апат-çимĕç памалла.

Уйăп ларчĕ юнашар.
— Юрĕ, — терĕ, — калаçар.

Уйăп çырла тата ӳсен-тăран вăррисене çисе пурăнать, хурт-кăпшанка ăнсăртран çеç тытма пултарать. Йăм хĕрлĕ пĕсехелли — аça кайăк, амин хырăмĕ, кăкăрĕпе мăйĕ хăмăртарах тĕслĕ. Уйăпсене эпир хĕлле çеç куратпăр, çавăнпа та хăшĕсем вĕсене хĕл каçма вĕçсе килнĕ кайăксем теççĕ. Тĕрĕссипе, уйăпсем çуркунне тата çулла вăрманта, чăрăшсем хушшинче, пурăнаççĕ.



# ÇИРĔК ТĂРРИ.

Шурă çирĕк тăрринче —
Çирĕк тăрри кайăкĕ.
Пырса ыйтрăм пĕринче:
— Унта сана лайăх-и?
— Лайăх, лайăх, пит лайăх, —
Терĕ мана çав кайăк. —
Çирĕк вăрри пухатăп,
Çирĕп çиппе çыхатăп,
Хам йăвана хуратăп,
Çиес килсен çиетĕп,
Савăннипе юрлатăп,
Сире вăййа чĕнетĕп.



Çирĕк тăрри — пысăк ушкăнпа пурăнакан кайăк. Пирĕн пата хĕл çывхарас вăхăтра вĕçсе килет. Çĕнĕ вырăна тĕпчеме малтан пĕр-икĕ кайăк çитет, каярахпа — пысăк ушкăн.

# КУКĂР СĂМСА.

Çак кайăкăн теетĕр,
Сăмси кукăр теетĕр,
Çав сăмаха илтнĕ чух
Ман кӳренес шухăш çук.

Ма тесессĕн, тăвансем,
Хаклă, ырă çыннăмсем,
Сăмси кукăр пулсан та
Ĕçе тӳрĕ тăватăп,

Эсир йăнăш утсан та
Тӳрлетес шут тытатăп.



Йывăç çинче кукăр сăмса питĕ вăр-вар: чăрăш йĕкелĕ çине пуçхĕрлĕ çакланса тăрать те ăна татса илет, вара тепĕр йывăç çине ларса апатланать. Çĕр çинче çак кайăк питĕ çаврăнăçуллах мар.

# ШĂКĂЛЧИ.

Вăрманти пур кайăкпа
Кăмăл тулли калаçап,
Уйăппа та шăпчăкпа
Шăкăл-шăкăл пурăнап.

Çийĕм-пуçăм яп-яка,
Сассăм — кĕмĕл шăнкăрав,
Пĕтĕм юрăç кайăка
Пухăнма ярап йыхрав.



Шăкăлчи — пĕр вырăнта тăма пĕлмен вăр-вар кайăк. Апла пулин те çĕр çине анма юратмасть вăл, пĕрмай вĕçсе çӳрет. Кĕр çитсен шăкăлчи тĕрлĕ çум курăк вăррисене пуçтарса çиет, çапла ял хуçалăхне усă кӳрет.



# КУККУК.

«Куккук канмасӑр авӑтатчӗ...» —
Тесе юрлаҫҫӗ ман ҫинчен,
Чӑнах, канмасӑр авӑтасчӗ,
Ӗмри ан татӑлтӑр ҫынсен.

Ачи тӗреклӗн уралантӑр,
Яшлантӑр ҫӗр ҫулхи Кӗлпук,
Ыр ҫын ӗрчетӗр те хунатӑр, —
Ман урӑхла тӗллевӗм ҫук.



Эпир куккук хӑй ҫӑмартисене ют йӑвана хума юратнине пӗлетпӗр. Анчах ытти кайӑксем пекех йӑвара ларса чӗпписене пӑхса ӳстерекен куккук тӗсӗсем те пур. Африкӑра пурӑнаканнисем ҫӑмартисене ют йӑвара хӑвараҫҫӗ те чӗпписем тухсан вӗсем патне таврӑнаҫҫӗ, хӑйсем пӑхса ӳстереҫҫӗ.

# Ӳхӗ.

Кӗҫӗр вӑрмана мӗн пулнӑ —
Ёрлешет те кӗрлешет,
Вӗрен ҫакнӑн, ӳрлӗк хунӑн
Ӳлешет, ӳхӗрешет.

Ҫук, вӑрманӗ тӑнӑҫ теҫҫӗ,
Ма шавлас ҫил ҫук ҫинче,
Ӳхӗсем-мӗн ӳхӗреҫҫӗ
Ӳхинкел ӳплисенче.



Ӳхӗ — чи пысӑк та илемлӗ тӑмана, анчах та ҫак кайӑк ҫулсерен сахалланса пырать, ҫавӑнпа та ӑна Раҫҫейӗн Хӗрлӗ кӗнекине кӗртнӗ. Ӳхӗ кун каҫипе чылай сӑтӑрҫа тӗп тӑвать. Унӑн ура лаппипе чӗрнисем вӑйлӑ аталаннӑ. Шӑп вӗсемпе ярса тытать те вӑл пулас апата.

# ТĂМАНА.

— Тĕвик-тĕвик тăмана,
Каласамччĕ эс мана,
Санăн килӳ ăçтарах —
Тăварах, анатарах?
— Манăн килĕм ав лере,
Анкартинче, ӳплере,
Çăка кашта хунăскер,
Çиелтен хуп витнĕскер.
— Тĕвик-тĕвик тăмана,
Ыран тăнă-тăманах
Ман сан пата пырасчĕ,
Юмахласа ларасчĕ.
— Ыран мана ӳплере
Эс тупайăн-ши вара?
Эп çĕрле ялан ĕçре,
Тул çутăлсан — канура.



Тăманан куçĕсем хăй умĕнчине çеç кураççĕ. Пурпĕрех вăл йăлтах асăрхать, мĕншĕн тесен пуçне 270 градус чухлĕ çавăраять.



# ТĂРИ.

Ачасем, туятăр-и,
Мĕншĕн манăн ят тăри?
Ма тесен хир çийĕнче,
Тырă пусси тăрринче,
Шăрантарап юррăма,
Йыхăратăп ир тăма.
Шăтакан калчасенне
Сиктеретĕп сăпкине,
Сас парап хĕвел енче —
Пурăнатăп çĕр çинче.



Тăрирен пултаруллăрах юрăçа тупаймăн та. Вăл çӳл тӳпене çĕкленсе илемлĕ юрăсем шăрантарать, юрри инçете-инçете илтĕнет. Унăн кĕввинче ытти кайăксен, уй-хирти кăшлакан чĕр чунсен сассисене уйăрса илеççĕ тĕпчевçĕсем. Çапла майпа тăри мĕнле кайăксемпе юнашар хĕл каçнине е тăван çĕрте мĕне тĕл пулнине пĕлеççĕ.

# ĂСАН.

Хура вăрман хĕрринче
Тăхăр ăсан пурăнать,
Кашни ăсан йăвинче
Виç çăмарта курăнать.

Ачасем, сиртен вара
Ыйтса пăхма юрать-ши:
Çавă тăхăр йăвара
Миçе çăмарта
выртать-ши?



Ăсан — ушкăнпа пурăнакан кайăк. Хĕллехи сивĕсенче виç çĕре яхăн кайăк пĕрле пухăнать те шартламана юр айĕнче тӳссе ирттерет. Кирлех пулсан унта талăк та ларма пултараççĕ вĕсем, апатланма çеç тухаççĕ. Ăсансем уйрăмах хурăн кăчкине кăмăллаççĕ.

# ПĂЧĂР.

Кăчăр-кăчăр çурла сассине
Пăчăр илтрĕ ыраш хушшинче,
Куçса кайрĕ хăва кассине,
Йăва турĕ çырма хĕрринче.

Кăчăр-кăчăр çурли выртăрах,
Йăва валли çавах вырăн пур,
Çийĕ хăмăл хӳттинчи тырра,
Усă шыв ăна ĕçтерĕ шур.



Пăчăр — çав тери асăрхануллă тата куç тĕлне сайра лекекен вĕçен кайăк. Вăл, вичкĕн куçлă та çивĕч хăлхаллăскер, пĕр-пĕр хăрушлăх çывхарнине çийĕнчех сисет, часрах тарса пытанма васкать.

# ПУТЕНЕ.

Эпĕ, путĕр путене,
Аслă хирте пурнатăп,
Çĕрле ыраш пуссине
Çывăратса яратăп,

Кăнтăрла та каçхине
Ун канăçне сыхлатăп,
Тырă-пулă тухăçне
Пысăк пулма сунатăп.



Путене — вăр-вар та çивĕч кайăк. Апат шыраса вăл питĕ нумай чупать. Вĕçессе вара хăвăрт тата тӳрĕ вĕçет пулин те инçе каймасть. Тăшманран чупса хăтăлать.

Ч-И5134
Национальная библиотека Чувашской Республики

# КАРӐК.

Карӑк тени мӗн тени?
Карӑп ҫӗнӗрен тени.
Ҫӗнӗрен мӗн кармалла?
Телей ҫулӗ кармалла.
Ун ҫине хӑпармалла,
Мал еннелле каймалла,
Сӗрен витӗр тухмалла,
Хӗвеле пуҫ таймалла...
Ҫапла шутлать карӑкӑр.
Карӑкпа пӗрле пулсан,
Вӑл шутланӑ пек тусан
Пурнӑҫа ӑнтарӑпӑр,
Телей ҫулӗ карӑпӑр.



Карӑксем — пӗр вырӑнта пурӑнакан кайӑксем. Вӗсем лайӑх вӗҫеҫҫӗ пулин те ытларах ҫӗр ҫинче ҫӳреҫҫӗ, уйрӑмах вӑрман уҫланкине кӑмӑлласҫӗ, унта апат тупма ҫӑмӑлрах.



# ПИЛЕШ КАЙĂКĔ.

Вăрманти сĕвек пилеш
тайлăкĕ,
Пилешсем шап-шур çуркунне.
Пилешсем çинче пилеш кайăкĕ
Шăрататать хитре юррине.

Вĕренме кайран куçса кайăп-и
Хулана тăван ялăмран,
Сан юрру-кĕввӳ,
пилеш кайăкĕ,
Тухас çук нихçан асăмран.



Хитре юрланăшăн пилеш кайăкне «вăрман шăпчăкĕ» теççĕ. Вăл ăслă, çав вăхăтрах хăюллă, асăрхануллă, чее кайăк. Йăви патне тăшман çывхарнине курсан тапăнать, анчах чараймасан чееленет: аманнă пек пулса уксахласа сиккелет. Çапла майпа тăшмана йăваран айккинелле илсе каять.

# ШĂПЧĂК.

Шăпчăк пырса ларсассăн
Çăка ярать юрласа.
Шăпчăк пырса ларсассăн
Юман ярать юрласа.
Шăпчăк пырса ларсассăн
Вăрман ярать юрласа.

Атя, Анюк, вăрмана,
Çăка çумне тăрăпăр,
Атя, Çинук, вăрмана,
Шăпчăкпала юрлăпăр.



Шăпчăк — питĕ илемлĕ юрлакан кайăк, анчах та кашни аçа шăпчăк пиркиех апла калама çук.

Ашшĕ е пултаруллăрах кӳрши вĕрентсен çеç çамрăк кайăк илемлĕ юррипе савăнтарĕ. Пĕри вĕренсен ытти тантăшĕсем те унран юлмаççĕ.

# КĂСĂЯ.

Чи-чи, кăсăя,
Вăхăтна ан яр сая,
Утмăл тенкĕ укçу пур,
Хăвăрт вĕçме вăю пур.
Пасар ялне çитсе кил,
Кантăр вăрри илсе кил.
Кантăр вăрри çисессĕн,
Çумăр шывĕ ĕçсессĕн
Пурнăç кайĕ лайăхрах,
Кăмăл пулĕ хавасрах.
Урăх пире мĕн кирлĕ?
Лайăх кăмăл пит кирлĕ.



Çулла кăсăя хăй мĕн чухлĕ таять, талăкра çавăн чухлĕ кăпшанкă çисе ярать. Сивĕре апат тупма йывăр, тăрантармасан çуркунне тĕлне вунă кăсăяран иккĕшĕ çеç чĕрĕ юлать. Кăсăясене, вăрман кайăкĕсене хура çăкăр пама юрамасть. Вăл пĕсехере хăвăрт йӳçсе кайăка вĕлерме пултарать.

# ВУТ ХӲРЕ.

Горихвостка — вут хӳре,
Пит ӗрӗхсе ан ҫӳре,

Хӗрлӗ тӗслӗ кăкрупа
Пӗр пекех эс ҫулăмпа.

Ҫулăм курӗ те сана
Илсе кайӗ тыткăна.

Ав ларать кӗрен шăлан,
Ҫавăнта кӗрсе пытан.

Вăрманти кӗренлӗхре
Паллă пулмӗ вут хӳре.



Ахальтен ҫапла каламан ҫак кайăка. Хӳри унăн ҫулăм тӗслӗ. Ăна вăл кăшт вӗлтӗртеттерсе илет те самантлăха хытса тăрать.

Вут хӳре хурт-кăпшанкăпа тăранса пурăнать. Ҫуркунне кунӗн-ҫӗрӗн юрлать, утă уйăхӗн ҫуррinче шăпланать.

# ШĔЛИНКУРĂС.

Палан тесен палан пек,
Пилеш тесен пилеш пек:
Çиййĕ-пуçĕ хĕп-хĕрлĕ,
Çунат вĕçĕ тĕп-тĕрлĕ.
Шăхличĕпе шăхăрать,
Йăх-несĕлне йыхăрать,
Пĕтĕм хĕрлĕ кăкăра
Хăй тавралла пуçтарать.



Шĕлинкурăса тăранма пĕлмен кайăк теме пулать. Хĕл кунĕсене вăл апат шыраса е çисе ирттерет. Пилеше, палана, катăркаса, шăлан çырлисене курсан вĕсене пĕр çырла юлмиччен сăптăрать, ытла васканипе чăмламасăрах çăта-çăта ярать.



# ЧАВКА.

Ёне çинче ларать чавка,
Ан пыр, Тимуш,
пит çывӑха,
Чавка кайӑк вӗçсе кайӗ,
Ула таккана пуç тайӗ,
Эс хӑратни çинчен калӗ.
Ула такки час хускалӗ,
Сан патна вӗçсе çитейӗ,
Тимуш усал ача тейӗ.



Чанасем (вӗсене чавка тесе те калаççӗ) пӗрре ӑсталанӑ йӑвара чылай çул пурӑнаççӗ, çавӑнпа ӑна питӗ тӗплӗ тӑваççӗ. Çак кайӑксем пӗр-пӗринпе туслӑ, пӗр вырӑнта темиçе çемье йӑва çавӑрни те час-часах тӗл пулать.

# КУРАК.

Çил-тăмана çĕнтерсе
Курак килет кăнтăртан,
Кив йăвине çĕнетсе
Сасă парать кăмăлтан.

Ун сассине илтсенех
Çула тухать Хĕл Мучи,
Кайрăм ĕнтĕ тет тинех,
Эс халь пул тет кил хуçи.



Курак — тыр-пул уйĕсен сиплевçи. Çурхи ĕçсем пуçлансан вăл кунĕ-кунĕпе трактор хыççăн çÿрет — сиенлĕ хурт-кăпшанка тупса çиет. Çапла майпа курак пахчана е уйри тыр-пула сиен кÿрекен кăпшанкăсене ĕрчеме памасть.

# КЁПШЁЛ.

Пёри çӳрĕ мĕшĕл-мĕшĕл,
Тепри пулĕ вĕлтĕркке...
Ăнланать пурне те кĕпшĕл:
Кирлĕ пурнăçра йĕрке.

Ир-ирех вăл вăранать те
Тирпейлет малтан хăйне,
Йăвинчен часрах тухать те
Вĕçтерет апат патне.

Хыр та чĕнчĕ ав хавассăн,
Хурăн чĕнчĕ: «Пул хăна!»
Иртерех тăрса тухсассăн
Кайăк тутă яланах.



Кĕпшĕле вăрман хуралçи теме пулать. Кам та пулин çывхарнине тӳрех сисет, çийĕнчех ытти кайăксене чĕриклетсе пĕлтерет. Кĕпшĕл юман йĕкелĕсене юратать, вĕсене хĕлле валли йывăç тымарĕсем айне пытарса хурать.

# ЧАКАК.

Чак-чак-чакакак,
Чак-чак-чакакак!
Чакак пӗр ҫул тултарчӗ,
Хӑна-вӗрле пуҫтарчӗ.

Ӑсан сӑра ӑсасшӑн,
Курак кукӑль касасшӑн,
Пӑчӑр парне парасшӑн,
Шӑпчӑк шӑпӑр каласшӑн,

Тӑри ташша тухасшӑн,
Тӑхран такмак пуҫласшӑн —
Чак-чакак чарӑнаймасть,
Ҫынна сӑмах параймасть.



Чакак йӑви ҫавракана, унта кайӑк айккинче ятарласа хӑварнӑ шӑтӑкран кӗрет. Тӑрри йӗплӗ. Ҫӑмартисене никам та ан туптӑр тесе чакак темиҫе йӑва хатӗрлет, пӗрне ҫеҫ йышӑнать.

# ÇЕРÇИ.

Çерçи чĕвĕл-чĕвĕл тет,
Ырă хыпар пĕлтерет:
Кĕçех пирĕн еннелле
Ăшă çумăр килмелле.

Ăшă çумăр килĕ те
Уя-хире шăварĕ,
Кĕркуннепе кĕлете
Ылтăн тырă тултарĕ.



Çерçи — çын çумĕнче пурăнакан ăслă кайăк. Хăйне ăçта епле тытмаллине хăвăрт ăнкарать: ялта вăл пĕр тĕрлĕ пулсан, хулара — пачах урăхла. Çерçи инçе вĕçеймест, ытларах çĕр çинче сиксе çӳрет. Вăл тавралăха кĕрен тĕспе курать.



# КĂЙКĂР.

Ăмăрт кайăк, пĕркĕт,
кăйкăр —
Эпĕр пурте пĕр йăхран.
Кам çула пӳлмешкĕн
хăйтăр
Кăйкăр йышĕ улăхсан.

Çăлтăрсем пире курнаççĕ
Кил çути пек çывăхран,
Сăвăçсем пире мухтаççĕ
Эпĕр паттăр пулнăран.



Кăйкăр — вичкĕн куçлă чаплă сунарçă. Вăл пĕчĕк кайăксене тата кăшлакан чĕр чунсене тытса çиет. Тӳпери пĕчĕк кайăка çухрăмран, курăк ăшĕнчи шăшие темиçе çĕр метртан та курать.

# ХӐЛАТ.

Ҫӳл тӳперех пурӑнатӑп,
Ҫулҫӑ евӗр ярӑнатӑп,
Аялта шӑши курсассӑн
Чул пекех ҫӗре чӑматӑп,
Ҫиййӗнчех ярса тытатӑп.

Тиркеместӗп чӗпсене те,
Йӑпӑрт ҫеҫ анса илетӗп,
Хырӑма тӑрантарсассӑн
Пӗр кана эп тӗлӗретӗп,
Унтан ҫӳле ҫӗкленетӗп.



Хӑлат шыв хӗррине е шурлӑхлӑ вӑрмансене кӑмӑллать, унти кайӑксемпе туслӑ пурӑнать. Вӑл ӳксе юлнӑ апата е чӗр чунсен виллисене пуҫтарса ҫиет.

# ХУРЧĂКА.

Укăлчара хурăн та çăка,
Çӳлте вĕçсе çӳрет хурчăка,
Систермесĕр сиксе ӳкесшĕн,
Хур чĕппине тытса çиесшĕн.

Хӳтĕлеççĕ хурăн та çăка:
«Хур чĕппине ан тив, хурчăка,
Асăрха та вичкĕн куçупа
Тытса çи е пулă, е шапа».



Хурчăка тĕрлĕ кăпшанкăсенчен пуçласа мулкач, пакша таранах тытать. Пулас апата курсан хурчăка ăна çиçĕмле хăвăртлăхпа тапăнать. Хăвалана чух тискер кайăк тимлĕх пирки пачах манать. Ун пек чухне вăл пĕр-пĕр çӳллĕ йывăçа е пысăк çурта çапăнма пултарать.

# ЧĔКЕÇ.

Чĕкеç, чĕкеç, чĕкеçĕм,
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхеçĕм,
Ĕнтĕ вĕçсе килтĕн-и,
Çырмаран тăм илтĕн-и,

Çĕнĕ йăва çавăрма
Ирпе ирех тăтăн-и,
Чăваш çĕрне мухтама
Çĕнĕ сăвă хыврăн-и?



Чĕкеçĕн пурнăçĕ вĕçевре иртет, вăл хушăран çеç канма е йăва çавăрма кирлĕ хатĕре илме анса ларать. Çак илемлĕ кайăк вĕçеврех вĕтĕ кăпшанкăсемпе апатланать, шыв ĕçет, вĕçсе иртнĕ май çăвăнать — кĕлеткипе шыва перĕнет е пуçнех чиксе кăларать.

# САР КАЙĂК.

Сарă, сарă, сап-сарă,
Çурхи хĕвел сап-сарă.
Тӳпери хĕвел пекех
Сарă кайăк сап-сарă.

Сарă хĕвел мĕн тăвать?
Сарă тĕспе çупăрлать.
Сарă кайăк мĕн тăвать?
Савăнăç юрри юрлать.



Çуркунне сар кайăк юрланине питĕ сайра илтме пулать. Çитменнине, юрри илемлех те мар. Унăн йывăç тураттисем хушшине пытарнă йăвине тăшмансем ан тупчăр тесе аçа сар кайăк йăвинчен чылай инçе кайса юрлать.



# ВĔРШĔН.

— Вĕршĕн, ăçта вĕçетĕн?
— Шыв хĕррине вĕçетĕп.
— Унта мĕскер ĕçлетĕн?
— Çак ĕçсене ĕçлетĕп:

Çырмара, хĕвел енче,
Çĕнĕ йăва чаватăп,
Йăвара пурăннăçем
Çич çăмарта тăватăп.

Çавă çич çăмартаран
Çичĕ чĕп кăларатăп,
Чĕпсем вĕçекен пулсан
Кăнтăра çул тытатăп.



Вĕршĕнсен пурнăçĕ вĕçевре иртет. Вĕçеврех вĕсем çиеççĕ, ĕçеççĕ, çывăраççĕ. Урисем пĕчĕк тата вăйсăр пулнипе вĕршĕнсем утма пултараймаççĕ. Çĕр çинче аран шуса пыракансккерне тĕл пулсан пĕлсех тăрăр: кайăк аманнă.

# ШАЛАНКĂ.

Шăрăх. Кӳлĕ хухнине
Чунĕпе туять уланкă,
Пулăсем пăлханнине
Сывлăшра сисет шаланкă.

Çумăр çăвасса кĕтет
Типĕ хир, вăрман, уçланкă.
«Çутаратăп, чимĕр», — тет
Хурăн тăрринчи шаланкă.

Пуçтарать пĕлĕтсене,
Йыхăрать тек йĕс карланкă.
Шăварать чăваш çĕрне
Çумăр кайăкĕ — шаланкă.



Шаланкă — питĕ усăллă кайăк. Вăл шăшисене, тыркассене тата ытти кăшлакан чĕр чунсене тытса тăранса пурăнать. Унăн чĕпписем çулла пин шăшие яхăн çисе яраççĕ.

# УЛА ТАККА.

Пĕр шаккарăм, пĕр таккарăм
Юман атте вуллине,
Шĕкĕрен йăлтах тасатрăм
Кăкăрне те çурăмне.
Мĕнлерех-ши ун тăррийĕ
Терĕм, пăхрăм хăпарса.
Эй, мăнтарăн, хуп нăррийĕ
Хунă çăмарта туса!
Кур-ха эсĕ: сăтăр хурчĕ
Пĕртте ӳркенсе тăмасть,
Пурнăç йĕркине пăсуçă
Юманран та хăрамасть!
Шак! шаккатăп, так! таккатăп
Унашкал хурт-кăпшанка,
Пурпĕрех таса тытатăп
Çак хĕвеллĕ уçланка.



Ула такка пĕр çеккунтра йывăça çирĕм хут таккама пултарать. Апла мĕншĕн-ха унăн пуçĕ ыратмасть? Çут çанталăк ăна хăйне евĕр хӳтĕлев парнеленĕ. Кайăкăн пуç мимине ятарлă мышцăсемпе шăмăсем хӳтĕлеççĕ, пуç шăмминчи мышцăсем кайăкшăн чăн-чăн шлем пулса тăраççĕ.



# ВЁЛТРЕН ТĂРРИ.

Вёлтрен çинче йăва тунăран
Мана вёлтрен тăрри тееççĕ,

Маншăн çывăх вёлтрен мар, вăрман,
Хаклă унăн пётём çимĕçĕ.

Вёлтрен ют аларан хўтёлет,
Тăшмансене сăхать, вётелет,

Çавăнпа ман хёпёртес килет,
Савăнăç юрри юрлас килет.

Парăр çĕнĕ хăмăш шăхличне,
Эп пуçлатăп вăйă кёввине.



Вёлтрен тăррисем таврăнсан вăрман чёрёлет. Вёсен кашни юрри — вёçленнĕ произведени. Малтанах кайăксем ушкăнпа çўреççĕ. Аслăрах аçа вёлтрен тăррисем намăс курасран ыттисенчен уйрăлса хăйсене тёрёслесе пăхаççĕ — юрласа илеççĕ. Юрă майне аса илсен ушкăна таврăнаççĕ.

# ПӐРЧӐКАН.

Эпӗ, ачасем, паян —
Ирех йӑран чавакан.
Юрататӑп хам ӗҫе, —
Вылянать ҫеҫ кӗреҫе.
Умӑмрах ҫӳрет ялан
Йӑпӑр-йӑпӑр пӑрчӑкан.

Вӑл пӗрмай ыйтать манран:
«Тупса пар мана ӑман!»
Эп паратӑп та ӑман,
Вӑл мана калать: «Халь кан».
Эп кансассӑн, пӑрчӑкан,
Кам чавать вара йӑран?



Пӑрчӑкан — шутсӑр чӗрӗ кайӑк. Пахчари сиенлӗ хурт-кӑпшанка тупса ҫиет. Йывӑҫ ҫулҫине кӑшлакан хурта курсан сиксе те пулин сӑхса илет е вӗҫсе таракана хыҫҫӑн хӑваласа ҫитет — пурпӗрех тытать.

# ШĂНКĂРЧ.

Шăнкăрч килчĕ кăнтăртан.
Ыйтрăм эп ирпе унтан:
— Мĕнле çитрĕн? Лайăх-и?
Тепĕр çу касмалăх-и?

Шăнкăрч ячĕ юрласа,
Шăнкăрч пачĕ каласа:
— Килсе çитрĕм аванах,
Кĕтĕм хамăн йăванах.

Йăвине юсанăшăн,
Пушатса тасатнăшăн
Юрăпа эп тав тăвам,
Йышăн пирĕнтен салам.



Шăнкăрчсен юррисенче ытти кайăксен кĕввисене те, шапа кваклатнине те, чĕн пушă шаплатнине е йытă вĕрнине те уйăрса илме пулать. Шăнкăрчсем çын сассине те евĕрлеме пултараççĕ.



# ТЕКЕРЛĔК.

Таврăнчĕ апатпала текерлĕк —
Йăвинче ун пĕр чĕппи те çук.
Тухса кайрĕ шырама текерлĕк,
Кун шырарĕ, каç шырарĕ — çук.

Тул пĕрчи шап-шуррăн сăмсаланчĕ,
Шăтса тухрĕ ун çăварĕнче,
Эрлĕ сасă инçете саланчĕ
Йăлăмри парка çаран çинче.



Текерлĕк çўллĕ ўсмен курăклă çарансене кăмăллать. Йăвине вăл шыв-шуртан типмен çĕрсем çинчех çавăрма пуçлать. Чĕпписене аçи те, ами те черетпе ларса кăларaççĕ.

# АТӐЛ ЧАРЛАНӖ.

Чарлан, мӗнле пурнатӑн
Тесе ыйтас пулсассӑн
Эп хуравлӑттӑм ҫапла,
Ачасем ӑнланмалла:

Атӑл — манӑн аттеҫӗм,
Атӑл — манӑн аннеҫӗм,
Ҫутӑ хумсен юррине
Эп ҫӗклетӗп тӳпене.



Чарлансем — шыв хӗрринче пысӑк ушкӑнсемпе пурӑнакан кайӑксем. Хӑш-пӗр чухне вӗсен шучӗ темиҫе пине те ҫитет. Йӑвисене кирек мӗнле ӑпӑр-тапӑртан та пур ҫӗрте те ҫавӑрма пултараҫҫӗ.

*Литературно-художественное издание*

Для детей младшего школьного возраста

**Семендер Юрий Семенович**

**КИЛĔР, КИЛĔР, КАЙĂКСЕМ**

**ПРИЛЕТАЙТЕ, ПТАШЕЧКИ**

**Стихи**

*На чувашском языке*

Составитель *О.Л. Федорова*
Редактор *Г.А. Антонова*
Художник *С.А. Кангина*
Художественный редактор *Г.С. Самсонова*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректоры *Е.П. Казакова, З.И. Гаврилова*
Компьютерная верстка *Е.В. Ивановой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 21.08.12. Формат 70x100 $^{1}/_{16}$. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 3,87. Учетно-изд. л. 2,92. Тираж 1500 экз. Заказ № 1279. Изд. № 66.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Минкультуры Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография №1»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.
www.volga-print.ru
Тел. (8352) 28-77-98, 57-01-87, факс 55-70-95.

100.-

Чăваш кĕнеке издательстви

